Н. ХУСАНКАЙ

К С(Чув)
Х98
27341-чув

# Çĕр йĕркелӳ



ЧĂВАШИСТАТ 1932

К С (Чув)
Х 98

ХУСАНКАЙ

# ÇĔРЙĔРКЕЛŸ

ПРОВЕРЕНО
20 07

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1932

ВСЕНАРОДНАЯ БИБЛИОТЕКА УКРАИНЫ ВУНБ

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза г. Чебоксары
Канашская 16.

27341 - чув.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

7648 кн

Пуçлатăп
çĕрйĕркелӳ
калавĕ.
Пĕр
акрономпа
мишавай кăна
нихăçан та
пирĕн çĕре
аналаймĕ,

нихăçан та
касса
ӗикĕлеймĕ ăна.
Çĕр
çапçара хир,
вилĕ хир
пулсассăн—
йупа,
кĕреçе,

пиҫетни—
ҫитӗҫҫӗ.
Анҫах
ҫӗр сывлат;
пӗр ҫинҫен,
пӗр хулӑн саслӑн
ҫухӑрат ҫӗр
хайарран та
ҫивӗҫҫӗн.
Ҫӗрте
кӗрешӳ,
ҫӗрте
класлӑ вӑрҫӑ,
кам
ун айккине
тӑрса йулӗ?
Йурис,
инишенер,
петакок,
сӑвӑҫӑ—
кашнин
хӑйӗн помпӑ,
кранат,
хӑйӗн пуҫӑ.
Тавайӑр
мӗн пурӗ

пĕр анлă
фронтпа
тăшман лакĕрне
аттаклар
пĕрле.
Поем помпине,
кирлĕ тĕк—
ҫăн помпа,
сăвă сăннине,
ҫăн сăнна—
ан шелле.
Апрелĕн
пĕрремĕшне
вунă мĕлйунăн
кĕрсе
ҫăмăртаннă
кил-ҫурт
колхоса.
Мĕн ҫухлĕ
йалкор,
комсомолĕссен йунĕ
тумлаť
хаҫ
ҫав ҫыхвăрсенҫен
сăрхăнса!
Ку—

йунлă çĕртме,
вăрçса илнĕ çĕртме.
Кулăк-ерешмен
шăнана-ђухăна
хăй танатинђен
ахалех
вĕçтермест,
вĕт
унсăр
ниçтан та
сĕткен çук ăна.
Хуçалăх вăтамĕ
пит йывăр йăтаймĕ,
вăл
хăй кĕлетне
хăй уçма йуратаť,
хăрах урипе
хăй хуçа вăл вăтамĕ.
Патрак пур та
ђухăн—
ак урата.
Кусем
улталамĕç.
Кусем çинђе
хывăн
çĕнĕ çурта

никĕс,
сарă̆н урай;
анҫах
тăрласах ҫитейреймĕн:
ҫĕршывăн
ула—
хĕрлĕпе шурă йăх—
пит нумай.
Ку
ҫав
ҫĕлĕке пусса лартнă
вăтам.

**Вăтам.**

Икĕ вăй варрине
лекнĕскер.
Ăҫтан
ăшăрах ҫил вĕрет—
вăл
унта.
Мĕне пĕлтерет
ку вăйă?
Ак мĕскер.
Колхос
тунă ҫух
пĕр тĕрлĕ тăракан ҫын
хăйĕн тырпурки ăшĕнҫех

йулсан
вăл
пурпĕрех
ĕлĕкхи пек
„канăçлăн“
лараймĕ
хаҫ йейĕлсе—
хăй
„хам хуçа!“
Кулак тымарне
тĕппипех
кăкланӑ ҫух
вăл
пулатех
ҫухăнпа пĕрле.
Урăхла
нимле май та,
план та çук.
Вăтам умĕнҫе
хаҫ пĕр çул,
**пĕрре:**
Колхос
унăн çулĕ.
Ытах
пăрăнат тĕк—
кулак куллинҫен

именсеи,
мĕни—
ку
тинĕс варне ывăтан
перамат[1]) пек,
кам пур
тинĕсе
вăлтапа çĕнтерни?
Колхос
вăл хаљ тинĕс.
Пĕђђен çын—
вăлта,
ун
кунĕпе тытнă пулли те
— пĕр пус.
Пайани,
ырани,
тепĕр куни—
вăтам
пулат,
пулмаллах
талккăшпех
пирĕн тус...
Епĕр
халлĕхе
акрарлă[2]) çĕршыв.

Тинрех
хурçă-тимĕрленсе
пыратпăр,
тинрех
уйа çапрĕ
пенçин шăрши,
кашни лашанах
тăварманха
трактăр.
Анђах
хăлтăркка тылă пек
кĕсрепе
нумайах
сотсиалисăм тăваймăн.
Уйа
машшинтан
кармалла серепе,
уйа
тирпейлетĕр
компайăн.
Кĕсремĕрсене
тăварас пулать пирĕн,
— фортсон айрисем
хитререх,—
тесе мар ĕнтĕ:
фортсон лашине

кӳлсен
вунӑ хут,
ҫирӗм,
вӑтӑр хут
ӗҫре
хӑвӑртлӑх
хӑпарӑвӗ.
Ӗҫре
хӑвӑртлӑх
тырӑпулӑра—
тухӑҫ.
Анђах
пӗђђен-иккӗн
фортсон илме
йывӑр.
Хупа
пӗр канашлӑ
ӗҫђен йыша
пух ес,
ерехсӗр-сӑрасӑр
миме тума
йывӑр.
Хула
хатӗрлет
пусма,
ђей-сахӑр.

Сахăрăн--
савăт,
пусман
пур
хапрăкĕ.
Хресҫен
пӳлмине тӳпелет те—
сапăр,
капла
ĕҫ тума
пултаратпăриха?
Çук,
пире
кирлĕ
тĕштырă савăҫĕ.
Çынсем лартса панă
йантă
çурта
ухмах та
кĕрсе
вырнаçĕҫҫĕ;
ес
ху
йăт
комун кĕрешне
ху ҫутла.

Хула ёççынни
ёçлет
хёлён-çăвăн.
Хресҫен
çу каçаť те,
арлан пек
выртаť вара
шёкёлҫесе.
Йепле тăвăн
капла
комунисăм?
Хăçан вăл
тăрланё?
Çампа
пролеттариат тиктаттурё
патрак-ҫухăна,
вăтама ҫёнсе
шултра,
пёрлешўллё
хуçалăхсем турё.
Малтан
хăнăхсах çитеймерёç
сынсем:
— Йепле вăл
пёрле?
Арăмсем те

пĕрлеши?..
«Хай
ху çемйӳнте
латти çук та ара...»
— Иепле
ман кĕсре
йут алла
илешĕ?..—
«Йепле
сутам марха еп
хам тырра?..»
Хăшпĕр ђухне
хаљ те
унтан та,
кунтан та
çапла
сăмахсем
илтме пулат̆:
«ирĕк сутă тума
хăй Ленин
ђарман та!..»
Кам
çак
«вĕри ленĕнçĕ?»
Ку—
кулак.

Ленинисӑм—
пӑшал вӑл.
Ӑна,
псалттир пек,
хура кӑтатпа
пӗркеместпӗр
епӗр.
Ёнер
унпа
пенӗ
пӗр калипӗрпе,
пайан
епӗр
тепӗр калипӗр
илетпӗр.
Вилес ҫухнехи
ерешмен
усал пулатӑ,
теҫҫӗ;
вӑл
хытӑ ёмет.
Кулак та
ҫапла—
пур мелпе
кӗрешме
пуҫларӗ;

сисет:
пăрланат
ăш ĕмĕт.
Çĕнĕ
Економĕк политтĕкĕ
пире .
сывлăш çавăру
вăхăҫĕ
пулсассăн,
кулак
ҫăннипех те
шутланă пуҫ:
— сĕре
кăмăллă тиктаттур
ку класăн...—
Ларатҫĕ
вăл
çутă курнитсəра.
Çунат
йывăççу.
Ырă,
лăпкă кĕтес.
Кӳпет
сысна ашĕ,
сăхат
сăра,

çутти...
мар,
ăна вăл хаҍ
«рыккăвккă»
тет.
Сана вăл
хаҍ
шăршлă ханша
йухтараҭи
(кулак—
Виктăрăв сăвăç мар вĕт!)—
Ун
пӳлĕмĕнҍе
хартлатаҭ
ташĕ
раҭи,
вăл
ташĕ
хаçат та
вула пуçларĕ.
Вăл
ташĕ
ҍлен,
перекет касси ҍленĕ,
сайом илесси те
кĕрет

27341-чув.
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

шухăша;
страхховкkă укçи
ун
виç çуллăх тӳленĕ,
вопҕе—
вăл
«Канаш ирĕкне пулăшаṫ».
Вăл
ташĕ
хăйĕн йевҕине те
йанă,
ак
калăпăр,
ун
теппуттаҕĕсем:
малтан
Контратйĕвпала
Ҕайанăв,
унтан
Рамçина
пуççапаṫ ҕĕнсе.
Хаљ
ак тата
Кромăнпала
Сухханăв,
пĕтĕм

иккĕмĕш
инттернатсионал...
Çав
сар лаҕака ăшĕнҕе
çухалнă
çĕрĕк прушина
пĕл,
палла ес ăна!
Лере
хрантсуссен
кенераллă штапĕ,
кунта
вĕсен акĕнҕĕсем
ирттермеççĕ.
Пĕр-пĕр
тутăх шпорлă Шкуро
çитсе тапĕ—
пуçланĕ те,
тетҕĕçĕ пуљ,
интервентси.
Пуршуй
тĕктăмалăк
памаст пулăшу.
Вăрçă ку,
вăрттăн
авăрланнă пăшал.

Совет анине
сухаласшăн
пуршуй.
Итле
ҫикĕ урлă килен
пăш-пăша.
Вĕсем
шухăшпа
пире
уйăрнă ĕнтĕ,
Сойус карттине
сарса хурайнă:
пĕрне
Туркестан,,
теприне—
Пакку,
нехтă,
виççĕшне
Украйнă.
Анҫах
ҫикĕ урлă та
пур пирĕн
шанҫăк,
ахаљ мар
çак
тар типĕтнĕ

кунсенҫе
Испани королĕ
Алҫфонс
персе анҫĕ
хăйĕн çĕрсе тайăлнă
тронĕ çинҫен.
Пиреней
çурутравĕ
инçеи?
Кипралттар
çав терех
сарлакаи?—
Револҫутсин
çунатлă
итейĕ
хĕрĕх тинĕс
шыв урлă та
кайĕ.
Пулас çапăçу
иртнинҫен
пĕҫĕк мар,
ку—
вĕçĕхĕррисĕр
темă.
Анҫах
вăхăт мар

хаҫ
унпа пăҫăхма,
фактăран
малалла
иртеймĕн.
Ак
вуна мĕлйун.
Çавракa,
ҫăмăр ҫыхвăр,
пуршуй шлепкине
пĕлĕм пек
вăл сарат.
Мейĕр,
Сухханăв,
Раçин тавраш,
çыртăр,
çыртăр
çăварăр çитсен
ҫавсăра!
Вунă мĕлйун
тӳптӳлек
ҫыхвăр мар вăл;
вăл
куçнă—
пĕр сикнĕ кунта,
пĕр лере.

Мĕлйун—
пинсенђен,
пин—
çĕртен
хăпарнă
çĕрсем—
вуннăран,
вуннăсем—
пĕрререн.
Вунă мĕлйун
хытса ларнă
тăм мар,
вунă мĕлйун
пулас çук
пирĕн ђикĕ.
Колхос хапхинђен
кĕриђђен
сăввăм ман
вăл
вунпĕр,
вунпилĕк,
çирĕме те
çитĕ.
Хушăр
ун ђух,
сăвăçран ыйтмасăрах,

хушăр
çĕнĕ ђыхвăр—
вăхăт
мĕн ђул калĕ.
**Пилĕкçуллăх**
**вĕçне тухиђђен**
**СăСăСăРа**
**коллективласа çитермелле.**

**Сталĕн.**

Вунă мĕлйун—
хĕрĕх прођђăн.
Ңумайи?
Пољшевиксемшĕн
нумай та,
сахал та.
Пирĕн
хаљ
тимĕр шапа пек
шумаи?—
Йурт хырăмсалăхна салт та!
Вĕçне тухасси
икĕ çул.
Вăрахи?
Пољшевиксемшĕн
вăрах та,
кĕске те.

Кам
çак самант
мăлатук пăрахĕ?
Çап—
пĕлĕте
хĕм çĕклентĕр!
Мĕн ҫухлĕ
хăвăрт—
çавăн ҫухлĕ
ҫасрах
пур пек йăвăрлăха
çĕнтеретпĕр.
Вĕт
пирĕн
пĕртен-пĕр
ĕмĕт асра:
Комунисăм
тăватпăр
епĕр.
Комунă.
Мĕскер вăл?
Тем пысăккăш
палăк,
йе
çенĕ Хеопс[3])
хăпартан

пирамит?
Вăл та мар,
кута мар.
Анҕах
паллă:
хаљхи виçесем
ун патне пырайми.
Комунă
вăл
вĕçĕхĕррисĕр
пуйанлăх.
Мĕн пур
çĕрте выртнă саппас
çийеле тухса
çĕнĕ кӳлепе,
çĕнĕ форăм
туйанĕ,
тăм пек
пăхăнĕ
алăпа ăса.
Çĕрти
çитмесен
инçетри çăлтăрсем çине
хăпарĕ
аттакпала
ирĕк етем.

Хаҫхи
харкашу выранне
ҫӗнӗрен ҫӗнӗ
пуҫланӗҫ
ҫынпа
ҫуттӗнҫе
вӑрҫисем.
Комунӑ
вӑл
урӑм та сурӑм
машшинлӑх.
Машшин
хуҫа мар,
машшинсен сасси—
тулли пурнӑҫӑн
килӗшӳллӗ ташши вӑл.
Профеҫҫи те ҫук,
ҫук ӗҫе пайласси.
Тӑватӑн
мӗн ҫухлӗ пултарнӑ
таран,
илетӗн—
мӗн ҫул
пӗтерме пултаран.
Нимле
кӗрешӳ те.

пулмасӑ,
нимле тарҫӑ.
Ĕҫ
хӑй
йыхӑрать,
ĕҫ—хаваслӑх,
телей.
Ана трактӑрларĕ,
сӑвва шӑрантарҫĕ,—
ҫĕрӳ
хӑш май выртрĕ
— ҫав май
кĕвĕле.
Комунӑ
вӑл
темĕн сарлакӑш
ирĕк.
Пиншер ҫул
тӑкӑннӑ
етем куҫҫулҫне
йурлан шӑрҫасем туса,
туп-тулли
тирĕ
ҫĕнĕ,
телейленнĕ йӑх
кӑкӑр умне.

Нумай
        вăйă-кулă,
                нумай
                        савăнăç.
Арттис кулли мар;
        ман шухăшпалан
ун ђух
        тĕнђипех
        пĕр уйав пулса
                çаврăнĕç,
тусанлă театтăрта
        лармĕç аллам.
Комунă
        вăл
                темĕн çӳллĕш
                        ăсталăх.
Ак,
        калăпăр
                темскер
                        çитмест сана.
Киђем
        (халђхилле каласан).
                Уç та алăк—
пĕтĕм пӳлĕме
        йантратат...
                Мĕн?—

## Сонат.

Ăçта унта
санăн
Петховĕн-Мотсартă![4])
Хупан
алăка—
ђарђĕ мусăк.
Уçатăн
— каллах.
Хурлăхна-мĕнне
ђартăн,—
тытан
ху ĕçне.
Вăй кĕнĕ.
Куç салхусăр.
Комунă
вăл
темĕн тарăнăш
шухăш.
Хаԓхи
Ваçанкка пек
саркайăксене
унта
електритсăпа та
тупас çук уш,
вĕсен

ђĕлтĕркке хӳрисем
хĕсĕнĕç.
Унта
пĕрпĕрне
кĕвĕçсе
ăмсанмăн,
хутламăн
„асли“ умĕнђе
ђĕркуççине.
Комунăн
котексĕ:
сан—
манăн,
ман—
санăн,
веçех
— савнипе
питшăллисĕр пуçне.
Комунă
халђђен йалкăшман
йурату вăл.
Çемйе тăллипе
тăлласа
варлине
ађа кипки çеç
шăршлакан

ҫура тумăн,
ҫатма аври ҫеҫ
тытмĕ вăл
аллине.
Нихҫан
пурăнса курман
тăм келеткен—
Атамăн—
ҫийак пĕрҫинҫен
„Тунă“ а р ă м
ҫухатĕ
ун ҫух
хăйĕн ирсĕрлĕхне,—
пулмасĭ
ҫĕлхере
ҫав сăмах
комунăран.
Пулмасĭ
**ҫăраççи** те **сăнҫăр**
ҫĕлхере,
пулмасĭ
**ҫăваш вырăс,**
**ҫаххуткă** та
**ҫифĕлĕс.**
Комунă
вăл

сыввăн тапан
пĕр ђĕре,
унта
виççĕртисем те
кĕрен ўпкен сывлĕç.
Комунă
вăл
çамрăклăх.
Çамрăк çĕр.
Пулмасть
çурта-латăн та,
тупăк-хĕрес те...
Малашлĕх пиолăкĕ!
Çавăр,
ђĕрт,—
еп
хам пурнăçа
**çавăн ђух**
пĕтерес теп!
Ак
калĕç
«уттоппи»,
ак
калĕç
«фанттаçи».
Анђах


7648КН

ђĕлхĕре
малтан туптăр.
Пайанлăхпа çеç
пурăнас пур—
ан та çыр,
суха та
ан ту,
ан çĕкле
мăлатук та.
Епир
хаљ—
истори руљне
йарса тытнă,
мĕлйун алăпа
ђăмăртанă
штурман.
Епир—
пролеттариллĕ
хытлăх.
Кун пек
тĕрĕслĕх
çуттĕнђе курман.
Пролеттари
пур тансăрлăха
пĕтерĕ;
ун хыççăн

тек пулмĕ
пуйан,
пулмĕ йурлă.
Комунă çĕрне
сотсиалисăм кĕперĕ
kaçарĕ
ђăнкă
тиктаттур
çырми урлă.
Сотсиалисăм—
план,
тистсиплин,
йĕрке.
Ун
примерĕ—
пĕр шăнăрлă партти.
Мĕн ђухлĕ
киревсĕр,
йăх-йах
кирĕке
хăй ўђĕ çинђен
вăл
шăлса антарђĕ.
Тĕттĕм
тĕпсакайĕсенђе
çуралнă,

шăн каттăрксене
пуçилле йанăскер—
вăл
ҫирлĕ те пулнă,
вăл пулнă
сураҥлă,
анҫах
мĕн çĕнтерĕ ăна?
Мĕскер?
Çĕпĕр тайки витĕр,
Йаккут хирĕ урлă,
Финљанти çаранĕ çинҫи
ӳплерен
çитсе тӳрлетет
пĕлсе каснă хируркăн—
Илйиҫăн—
емелĕ
кашни ӳттире.
— Пĕрне
вĕлерсессĕн
тата
вуннă хатĕр,
каллех
партти мускăлĕ
тимĕр пек.
Малалла, пролеттарисем!

Атăр
хăватлă ăс
Марккăс
хывнă йĕрпе!
Пролеттарин
хăй сăнӡăрĕсĕр пуçне
тек нимĕн те çук
çухатмалăх;
илессе
вăл
илĕ
пĕтĕм тĕнӡене,
ăна
ĕмĕрлĕх
пăхăнĕ çутçанталăк.—
Пайанлăха
çĕрĕн
улттăмĕш пайĕ
пролеттарипе
унăн
парттийĕн.
Ленинисăм
тĕнӡе тăрăх
кайрĕ,
кранит
мавсолей

        ăшĕнҫе
                виле мар, тийĕн.
Амăрту хăвăртлăхĕ
    ҫултан ҫул
ҫĕршыва
    улăп пек
        хăпартрĕ.
Кам
    вăл
        ҫав
            ывăнми сунталҫă?
Вăл—
    Ленин туптанă
        партти.
Партти
    ҫапăҫăва
        йертсе тухрĕ,—
ҫĕнтерўллĕн
    ҫĕкленҫĕ
        йалав.
Партти
    ĕҫхатĕрне
        пĕрле пухрĕ,
партти
    кăклат акă
        кивĕ йала.

Йепле
пурăнаттăмăр
епĕр
хаљђђен?
Пăхарха
калла ђакса
кăшт кăна.
Утарха
пĕр-пĕр
ђăвашкас Шăхаљтен
пĕр-пĕр
салана
Воскреççенккăна.
Уй,
хир.
Хир те
уй.
Пиçихи пек
ансăр
выртаççĕ анасем.
Ситрелђĕк,
çинçе.
Нумайĕшĕ
йулнă
сухаламасăр,
выртаççĕ

хĕвел питĕнђе
ĕнсе.
Раххат
хурт-кăпшанкăшăн,
ырлăх шăрђăкшăн:
мăйан,
армути,
йытпырши,
пиçен.
Тырра
шĕкĕлђеççĕ те—
ывăçăн,
ђашкăн
çăварниђђенех
кĕленетпĕр
кивçен.
Пуйан Каруксем
ахалех
тыттармаççĕ,
пĕр çапнă кĕлтешĕн те
сикĕç шыва.
Илетĕн
иквиç пăт—
çур çул
пулан тарçă,
атту—

кутӑнти йӗмне
хыван.
Хӗл каҫрӑн
шӑна пек—
ни выҫӑ,
ни тутӑ.
Кӗтен
акнине—
ыраш мар тӑк
пӑрҫа.
Айӗах
пӗр тумлам
ҫӑмӑр ҫук.
Ҫуртна хуп та
уттар пурлака
йе каллах
кӗр тарҫа.
Каллах
йулашки
алсатулӗ таран
леҫсе пӑрахан
саклата.
Каллах
арӑмна
шӑлкеме таттаран,
сурпан ҫаккине

салатан.
— Памарĕ турă,
шуйттан памĕши?—
тен:
тытатăн
карт
йарăнатăн
вăййа.
Малтан
пăртак шиклĕн—
вершукăн,
шитĕн;
кайран—
хăлаçшар,
çуҗрăмшар та
кайаҭ.
Пĕр саспалли
палламан
тăм писмен те
çав
вăтăр ултă листаллă
«кĕнекене»
уçа-уçа
сурҍăкпа ислетнĕ,
ăссăн веренне,
ăшне кĕнĕ.

Акнă ана та,
шăтнă калђа та
орљанккăпа
картшăн
пĕтни
вĕççĕр.
Пайан
пĕр çурпилĕк,
ыран—
çиђĕ йатăн,
тепĕр кун
вуник çуллăх
вĕçерĕнђĕ çĕр.
Хуйхă
хуплат.
А хупах мĕншĕн?—
Кĕрет те
кўпет,
кĕсйине те
тийет:
«Еп кам?!
Еп пуйан,
еп ăслă,
еп ырçын...
еп
хам халђ

пурмис,
хам тийек!
Çыхлан
манпала
пусђашки шалккă мар тăк...
Пăрăнăр!
Ман ăш...
ăш çунаť...
Мана
çут тĕнђе тăвăр,
кам
тытса ђартăр
Пуслай Ваçки[5]) пек
сарлака ђуна?!..»
Çапла
çÿресен
çухраша-çухраша
пăртак
ывăнаť те,
кайран—
пĕриншĕн
Çĕпĕр,
тепришĕн
типшар,
тепри—
ĕмĕрне

тухаймаст̆
тарçăран.
Пуйан Карукпа
хыткукар Михетерĕн
кĕлет тулли
тырă
çĕрет.
Вĕсен
кив капан та пур,
йепле тӳнтерĕн
ăна
урăхла
татмасан
çĕре?
Уй,
хир.
Хир те
уй.
Пиçихи пек ансăр
выртаççĕ
анасем.
Ситрелӗĕк,
çинçе.
Кĕр
йут йăрана
çур прусна

астумасăр—
тыттарҫĕ те йаҫĕ
хăлха ҫиккинҫен.
Ҫул
ҫын валĕнҫен
ăнсăртран
ҫикĕм утă—
ҫаран тăрăх
калăн
ҫикан тапăрĕ!
Унтан
сĕтрĕнеҫҫĕ
политсийĕн,
сутăн,
йе
пĕр
тĕттĕм каҫ
ҫут ҫава
тавăрĕ.
Шутлатăрха
йут
лупас урлă
пуҫтах
сар автан
вĕҫсе каҫма—
пĕтĕм

кӳршӗ-аршӑ
урнӑ:
«Ман ҫурт,
ман карташ,
ман пaҫма!..»
Хӑвӑн
хыҫалти пахчуна
уҫ алӑк—
кӳршӳ
ҫурӑкран
сӑнасах тӑрать...
Ҫапла
ҫирӗм пилӗк мӗлйун
хуҫалӑх
кӳтсе
пурӑначчӗҫӗ
ҫак таран.
Ҫирӗм пилӗк мӗлйун
пӗчӗк йӑва
ӗрчесе
сапаланнӑ
**Раҫҫей** текен
хир тӑрӑх.
Круҫин,
йе вӑл вырӑс,
тутар,

йе ђăваш—
п̆урин те
вĕсен
пĕр тымарђђĕ те
пĕр тăрă.
Истори
пире
пăхтарат̆
каллĕ-маллĕ.
Малтан
пур хресђен
пулнă
пĕр
маннă йал.
«Ак
килĕ улпут,
улпут
пире майлĕ[6])...»
тесе
шаннă вăл.
Шаннă пĕлтĕр,
кăҫал;
шаннă
тепĕр ҫулне,
шаннă виҫ ҫул,
тăваттă.

Улпуҫӗ
    килет
        вилнин шăтăкне
            питӗрет,
куҫҫуҫсӗр куҫне
    шăлам пек
        тăват те,—
тухса
    вӗҫтерет
        Питӗре.
Некрассăвăн
    маннă йалӗ
ҫаплах
    маннипех
        йулат.
Кӗтсех тăр—
    асту,
        майлӗ
сан пурăнăҫна
    хула!
Вӗсен
    акнă та,
        вырнă та.
Мӗскер вăл
    мушик
        улпутшăн?

Ӑман пек
вырт
пӗр вырӑнта,
«ҫӳлти»
ӗҫсене
ан хутшӑн.
Мушик
улпута
ӗне йевӗр.
Сӑват те
сӑват,
вил те пар.
Ытах
ҫав ӗне
сӗтсӗрлентӗр—
тытса улӑшат
йытӑпа.
Мушик
тухнӑ
пур тивӗҫрен!
авлан ес
савса,
ҫураҫса,—
хӗрне,
ху
хӗве хупиҫҫен,

паран
улпута
пĕр каҫа.
Тата
мĕскер пур
кунтан ирсĕр,
кунтан
йĕрĕнҫĕк
йапала?
Хресҫен
йăнăшат:
«сирĕр, сирĕр!..»
Анҫах
кам
сирсе йамалла?
Нумайĕшĕ
тӳсеймен ырлăх
тухса та тараҫҫĕ
пайар патĕнҫен.
Хӳтлет
таркăна
ҫăмăл йĕлтĕр,
сĕм хырлăх,
ҫеҫен хирлĕ,
сăрт-тулă
ула тĕнҫе.

Тăрат
таркăнсен варрине
шултра çын—
Тон шывĕн хусахĕ
Раçăн.
— Кам панă
çĕре
улпута?
Ăçтан панă?
Кăлар
вĕсене
йăвинҫен
хуса!..—
Куллен
вăйхăват
хăпарат Çтаппанăн:
холоп[7]) хутшăнат,
таркăн,
йурлă хусах.
Çĕнтернĕ йалсем
хусах тӳрешари
туса
йĕркелеççĕ;
мелнĕ тупсанах
улпут кĕлетне
уçтараççĕ ҫари,

ҫакаҫҫӗ
пупа,
тӳрене,
купсана.
Ирӗкен караванҫӑсене
хут ҫук,
ҫӗрле
аслӑ ҫул хӗррине
ан тух та:
Ҫтаппан Тимофейӑҕа
ҫут ҫул,
Ҫтаппан Тимофейӑҕа
мухтав.
Йулат
Аҫтӑрхан,
Ҕархули,
Сарӑту;
иртет
Самартан,
хӑпарат Ҕӗмпӗре.
Камра
саламат йӗрӗ пур—
сапӑр ту;
ларт йӳҫӗ уйран
ун умне
ҕӗн—кӗрет.

Çтаппанăн
    Мускав
        ĕмĕтре,
            туртатĕ Кремĕл.
— Пĕлĕрха,
    тет вăл,
        мĕн тути
            хусах ђысĕ!—
Анђах
    Кремĕле
        хўме урлă
            кĕреймĕн,
çăри унăн—
    пулнă
        питрех те пысăк.
Çăри унăн
    пулнă
        йĕкĕр ăмăрткайăк.
Çапайнă
    вăл
        хăлаçланса
            çуната—
Стаппан Тимофейăђ кимми
    хавăрт кайнă
калла,
    шыва май

хумханса,
анатa.
Иунланӑ шыва
ӑмӑрткайӑк,
йӳнҫетнӗ,
ҫулла
шӑнтӗҫҫӗ
хал ҫитсен
Атӑла.
Пӗр татнӑ
арман пӗвине
йӳн тетни
ҫасах пӗвесе
авӑртмашкӑн калла?
Революци
хупланнӑ.
Сӑлтавӗ—
куратна?—
тӗрлӗ ёҫлӗ ҫын,
тӗрлӗ пуҫ,
тӗрлӗ сас.
Ҫтаппанӑн
пулман
ӳссе ҫитнӗ,
хӑватлӑ,
йертсе пыракан

пĕр тĕллевлĕ
клас.
Иртет
пĕр ĕмĕр.
Раççей сăнсăпаҫĕ
пăртак
улшăнат
тĕнҫе улшăннă май.
Ак
ҫи малтанхи
савăт та
сасă паҫĕ,
шăппăн
шăлтлатат
малтанхи шăлтăрма.
Патшалăхсен
мул
ӳссе çитнĕ
кашнин,
ӳсен промысла
ăстасем
кăларттарат:
Аркрайт
хатĕрлет
арлакан машшин,
тĕртекеннине

хатĕрлет
Картрайт[8]).
Тĕртет ,те,
арлаť те Анкли.
Анђах—
машшин çумне
ут кўл,
йе çавăр шывпа,
пĕрех сăмахпа:
машшинсем
нађар;
çĕнĕ,
хăвăртрах ĕçлекен
машшин пар.
Ђĕр хатĕр
нумайçке,
сĕвемĕн суха—
хăçан
арласа пĕтерес
ку çăма.
Çампа
ђăрсăр ђунлă
Тшемĕс Уатт[9])
Машшин ўтне
сывлăш кўртме
пуçăнаť.

Халлап
хаљ
калаť:
ёçет тет вăл ђей,
умра
ђейник имĕш
Уатт иншенерĕн...
Пăхаť те—
ђейник хуппи
ак тытăнђĕ
сиксе ташлама,
мĕншĕн терĕн?
Уатт
ухмах мар:
— ку вăйа пар пире!—
тет.
— Мĕн ђухлĕ
лаша вырăнне
çаврĕ ку!..—
Ђуҭ çеç
çарамас ыткăнан
Архимет[10]) пек
тăрса
çухăрмасť
„еврĕккă!“
Лараťи

тепре
ђей ĕçме,
лармаст̆и—
ђейниж хуппинђен
тапранат̆
револђутси:
мĕн пур
шăкăр-макăр
кустар,
аласти
сиксе вĕрен сывлăшлă
ут айне пулђĕ.
Сасартăк
йалпа хула
хушшине
выртат̆
тĕпсĕр вар пек
уйрăмлăх.
Хула
ӳттирне хытарат̆,
прушинлет;
йал
уншăн
çӳçе хуппи,
хуйăр вăл.
Сĕвет те

сёвет
машшин
çав хуйăра.
Хресҫенĕн
йухаҭ
— хура мар—
хĕрлĕ тарĕ.
Машшин
халҍ
ăна
çĕрĕнҫен уйăраҭ,
машшин
çуратаҭ
пролеттари.
Раççей хирĕнҫе те
унта та
кунта
ҫăнк-ҫанк
ҫанклатаҭ
шăтăрнаклă сунтал.
Урал рутине
шăратаҭ
вырăс мулĕ.
Улпут
хресҫене
хăвалаҭ савăта.

Ун ђух ёнтĕ
палăрнă,
курăннă пулĕ.
Путтилăв[11]) мĕлки те,
Моросăвăн[12]) та.
Çыхат̆ те
лартат̆
вут вуђах умне.
Пиç, ён.
Йалти йăлмакран та
тăкăс
тăха çав.
Çампа
çак сăлттавшăн та
пур ĕлĕкхишĕн
çунса çĕкленет
çĕнĕ йат—
Пăкађав.
Каллех
Каçпирен пуçласа
Хусан таран
вирт кайат̆
çеçен хир тымарне
ёнтсе:
«Çакар
пур улпут йăх-тĕпне!

туртса антарар
хăйне те
леш кĕрт йыттине
трон çинђен!..»
Майра аслапай[13])
çавăн ђух
айне йанă,—
вăрман пек
салтак
хăват
„пунттă“ йенне.
Анђах
патшана хăмсаран
Йемелйанĕ
„еп—
виççĕмĕш Петĕр ĕмпÿ“
тет хăйне.
Каллех
Пăкађавăн
пулман
пĕр шăнăр,
пулман
пĕр прокрамлă
çирĕп тĕллев.
Сарептă вăрçи
хĕрĕх пин пуç

тăнă.
Хресҭен револҭутсийĕ
пĕтнĕ каллех.
Корппăс çине
корппăс
çĕклет кăпиттал.
„Алт, пролеттари,
кăлар
тимĕр-тăмăр!..
Кам унта
ахлатрĕ?
Хĕне,
тап йытта!
Сирĕн сăмах маҫ вăл
**кантар,**
**ывăнтăмăр...“**
Алтаť
пролеттари,
анаť
çĕр тĕпне.
Çĕрти
пурлăха
кăлараť
çийеле.
Çав пурлăх
ăна

темиçе ёмĕр кĕтнĕ,
çав пурлăх
ăна
сăнҫăрпа пийелет.
Колонисен йунĕпеле
çăвăнсан
мул
хĕп-хĕрлĕ питлĕ килет.
„Çул инçе, тет,
кĕскет
ман çула ес,
Йакур Стефенссон!..[14])"
— Çиҫҫас,
тет Йакур Çтефенссон,
кĕскетĕп.—
Йакур—
пролеттари.
Анҫах
ун пуçра пур.
Çыратӑ,
хуратат,
хисеплет,
туртат.
— Çиҫҫас,
тет,
веçех

пăспала кусăратрăр;
шуйттан та
ђараймĕ мана,
турă та!—
Пусах йĕкĕђĕ.
Маçтăрсумĕскер малтан,
кайран
вăл
тиректăр—
хăйиншĕн хăй лорт.
Ăна
перђетке вĕçертсех
алтытат
хуçи ун,
çĕр кăмрак патши
Ревенсворт.
„Кунта
ак
Манђђестĕр.
Лере—
Ливерппуђ.
Мĕнле
шухăшлатăр есир:
çав хушша
тен
сирĕн талантăрпа

май килет пуђ
пăртакçĕ пĕрмешкĕн?..“
тет мул.
Ĕç хушаť.
Тиректăр
çыраť,
хисеплет,
планшшет ђĕрет
мăшăрлă йĕрпе
Ливерппуљ- Манђђестĕре[15]).
Йĕрсем
ӳтленеççĕ,
йавăнаççĕ çĕленĕн.
Йĕрсем
йантраса
йывăçа ыталаççĕ.
Шпалсем-йывăççем
пĕтĕмпех
ђĕмсĕрленнĕ,—
ӳкеç те
выртаççĕ
хăлаçăн-хăлаçăн.
Ак
тулхăраť
пăравус
„Ракеттă“,

Сынсем
тавлашаççĕ,
тытаççĕ пари:
— Тийев
машшинтан
виçĕ хут
нăкрах, тет те,—
ăçта сĕтĕрмешкĕн!
Лартат мари!..—
„Ракеттă“
тийет
пилĕк хут та ытла,
паран вăхăта
икĕ хут
хăвăртлатат.
«Ракеттă»
çĕнтерне.
— Урра Йакура!—
Йаланхи пекех
премипе астараççĕ:
— Ыр кур,
Çтефенссон,
хăвна кура,—
„Йурат,
тет Йакур,
тавтапуç.

Рат старатсă!"
Йакур пăравусĕ
    каçат
        ђикĕ урлă.
Пĕри те
    йуласшăн мар
        айаккине.
Ак
    куç уçайми çил-тăманлă,
        йурлă
Раççей те
    сирет
        феотал ăйхине.
Кирпĕç çине
    кирпĕç
        йăтат
            вăл та.
Ўсет
    хапрăк-савăт,
        — пар, тет, пролеттари! —
Анђах
    ĕç алли
        пĕтĕмпех
            йалта.
Кама
    мул

тёрттерĕ,
кама арлаттарĕ?
Тавар
йышланат̆.
Тăкăнат̆ тырă-пулă.
Тăвăр
тавара
шалти пасар.
Помешҫĕк
пăхат̆
тулаллă,
тинĕс урлă;
пуршуйĕ:
— тавай,
тет,
шалта лавкка сар!—
Ҫейе акăлҫан
ўкĕте кĕми пулҫĕ—
тырра хаклатат̆,
илмест
пошлĕн тавраш та.
Америк фермĕрĕ,
Пруҫҫи улпуҫĕ
пырат̆ те
хыват̆
мĕн ҫул кирлĕ—

лаштăр.
Раççей кимми мар
вĕсемпе ăмăртмашкăн,
çĕкленĕ те
çапнă ăна
конккурентси.
Хресҫенĕ—
хăйне
кăшкăрат:
— пăртак маншăн
çак
халăх пăлханнă вăхăт
кун кӳринҫҫĕ.—
Салтак та тӳрккес:
Ак ăнмасӗ
Крым камппани.
Ак
пунттă та пунттă—
пуçлатăр пĕри çеç.
Улпут лупасси тĕлне
çулăм капланнă,
улпут паçмисем çинҫе
**криçĕс.**
— Çитет!—
тет ҫура,—
ман сĕтӗенпеле савăнтăр,

ман ҫурӑм ҫинҙе
таш ташлаттӑрҙҙӗ,
анӑр!—
Ҙи пысӑк улпут
Иккӗмӗш Елексантӑр
патша пуҫӗпе
шикленет:
„Тикӗн мар тӑр...
Кӑна,
улпутсем,
хамӑрах
тӑвар мари?
Таҫтан
айалтан
улшӑну кӗтиҙҙен
ҫӳлтен реформлас.
Мушике
кӑшт шантарӑр,
еп
турӑ тьвлеҙӗпе
пусӑп пиҙет...“
— Пусма
пусӑн та ес,
ӑна-кӑна сис:
штӑп
пирӗн

услам
çур măскал та
ан ђактăр!..—
Ак
ђарăлтаттарђĕ
патша
мăнахвис,
тăват йенне те
мушике
çул такăр.
Анђах
çĕр
пĕр шит те çук.
Çĕршĕн
тӳлев:
Тӳлев
ху ђунна
„ирĕкленĕшĕн“ те.
Мăнтарăнĕ
хаљ
ӳпне ӳксе ӳлет,
пиçме хатĕр
каллах
креппăсла сӳсменте.
Асту
ан кăларђђĕр сана

иреке,
асту—
коронланӑ пантит
çветтуй пулё!
Кунта
кӑпитталисӑмла
йёрке;
хуçа—
хапрӑк-савӑтçӑсем,
вёсен мулё.
Хресҫен
пайланаҭ:
пёри арентаттӑр.
Кулак.
Туртӑнаҭ
улпута хӑй.
Тепри
ҫунёшён
тӳлесе аран татрё,—
йе выçӑ вил,
йе •
савӑта кай.
Хресҫен
пролеттариленет.
Тёреклёленҫё
хӑвӑрт

кӑпиттал сӑпкинҫе
            ҫамрӑк клас.
**Наротнӗксем**
      тенӗ
            инттеликентси
пуҫҫаврӑнан сурӑх пек
      ҫаврӑнкалаҫ.
— Пӗтет халӑх,
      теҫҫӗ,
            халӑх пӗтет
Раҫҫейе те
      Йевроп хыҫӗнҫен
            тӗртсеҫҫӗн.—
„Вырӑс ҫынӗ
      хӑй пурӑнӑҫ йӗркипе те
сотсиалисӑма куҫмалла“
      тет Кертсӗн.
— Опшҫинӑран
      тӳрех
            комуна кӗме шепҫке,—
тет
      кайарах
            Ҫернышшевски.
— Кӑпиттал хапрӑкӗ,
      пӑравусӗ,
            вакунӗ

пĕтерет
револютси ĕçне,
таптат.
Револютсийе
халăх тăвĕ,—
тет Паккунĕн,—
вăл
вĕреннĕ
пĕрле пуранма
авалтан...—
Халăх та
халăх
çав халăхçăсенĕн,
вĕсен
„халлă“ халăхĕ
пулнă
хрестен.
Антах
хулара
корппăссем хăпарнăçемĕн
хăпарнă
тепĕр халăх
вуткăвар тĕртсе.
Рапоччи
пастовккăсем тунă,
пăлханнă.

Кӑтартнӑ
　　　хӑйӗн ҫиллине,
　　　　　　хӑй вӑйне.
Ҫампа
　　　ак
　　　　　　маркҫисӑм тӑлмаҕӗ
　　　　　　　　　Плеххан ӑв
пӗтӗм ӑсӗпе
　　　ҫаврӑнат
　　　　　　ун йенне.
„Раҫҫейре
　　　револҕутси
　　　　　　ҫӗнтерӗ
рапоҕҕи клас
　　　ҫӗкленсессӗн ҫеҫ,
унсӑрӑн
　　　шанҕӑк ҫук пирӗн
　　　　　　терӗ.
Вӗҫеҫ сӑмахсем,
　　　сарӑлаҫ,
　　　　　　кӗреҫ ӗҫе.
Мушик комунисӑмӗ
　　　ӑнман пирки
„Ҫӗрпе ирӗк“
　　　ушкӑн
　　　　　　саланат:

пĕр йенђен
«Халăх ирĕкĕ»
тухаҫ,
тепри—
ПăСăКăПă
ашшĕ
«Черный передел».
Кăпитталҫă
тунă
хăйĕн ĕҫне,
пролеттари
тунă
хăйĕнне:
кăпитталҫă
тумлам
йун ĕҫнĕ—
пролеттарин
ҫырма пек
ҫĕнĕрен
вăй кĕнĕ.
Пĕлнĕ
пролеттарин
малта пыран ҫарĕ—
етемлĕхĕн
хаљ
пĕр финал[16]) ҫеҫ:

ӗҫсен-ӗҫсен
пурӗпӗр
хӑсса кӑларӗ
хӑй пыршисемпех
ҫав йуна
кӑпитталҫӑ.
Ак
вӑл
йулашки пусӑмне
пусат̆,
йулашки картлашки ун—
империалисӑм.
Вара
пӗтерет
хӑй ӗҫне вӑл туса,
вара
вӑл
истори ваљљи сӑн.
Анђах
йулашки сӑхӑм
ђи хӑрушши,
вилȩт те—
сӑхса сӑналат̆
сана.
Ҫирӗм пилӗк,
вӑтӑр ҫул хушши

хӑйрат
    кӑпиттал
        ҫав сӑнна.
Ҫӗре,
    ҫӑмӑр ҫӗр ҫӑкрине
ҫӗллӗн-ҫӗллӗн
    касса
        уйӑрат те,
пуҫлат
    тӑпӑлтарма
        пӗр-пӗринне:
ҫын аллинҫи кукӑл
    пысӑк курӑнат, тет.
Пролеттари класӗпе
    унӑн партти
ҫав сӑнна хирӗҫ
    хӑйранса
        хӑпарҫӗ.
Парттин
    пулнӑ
        хӑйӗн ҫир,
            хӑйӗн кӗсен.
Партти
    сайралнӑ,
        ҫакнӑ,
            иккӗленнӗ;

анђах
        çĕмрĕлмен вăл,
                мĕншĕн тесен—
партти шăтăрнакĕ умĕнђе
        тăнă
                Ленин.
Кăпиттал
        çаптарнă та,
                кĕлтунă та:
                        «ей, пĕтинђђĕ
çак
        ман тарçăма
                йернĕ йерĕç-ултав...»
Анђах
        ак епĕр
                        кенералла́ реппеттитси
туса кăтартатпăр
        пиллĕкмĕш çулта.
Метталçă,
        пуставçă,
                шахтăр,
                        ђукунçулçă—
çирĕм тăвата́ мĕлйунăн—
        тăрат те
                тухат.
— Çитет!

Çур ĕмĕр
        савăта ӳксе йулђĕ...
Ху
    ан
        çĕр айне,
            ху ĕçле,
                ху туха!..—
Хресђенĕн
    суха калекки пек алли
хура тăпрана
    кармашат:
— Çитет
    пĕкрĕлмешкĕн
        помешђĕк вађђи!
Ђас
    хамрăн анашăн
        вăй парăн, лашам...—
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Хресђен
    сапаланђăк.
        Рапођђин
            сăнав çук.
Мухтавлăн
    пуçланă ĕç
        хурлăхлăн
            пĕтет:

Тупассӑв атти а[illegible]ӗнђе
йӑванаҫҫӗ,
кӑрлађ
йунӑхтарђӗ йура
хӗрлӗ хӑмаҫӑн,
витеймӗн
ӑна
Каппон рисипе те...
Унђђен
ҫынсем
шаннӑ:
«Патша вӗт!—
Пӑрахмӗ
хӑйӗн килйышне...
Кӗтӳ шавӗ марҫке
хура халӑх шавӗ.
Савитӗм кайар,
йышӑнӗ...»
Те
ӳсӗр пуҫпа,
те урӑ
ђӑваш та
йурланӑ
ӑшшӑн:
«Ҫӗрте и те патша,
ҫӳлте турӑ—

ăрахматах тĕнҫе тытнăшăн...»
Тытнă
тĕнҫе:
пĕр Питĕрте çеç
икçĕр
вилсе выртат,
сакăр çĕр—
суранлă...
Мĕн ҫухлĕ
ытти хулара
вĕлереç!..
Кун хыççăн
патша çине
шанҫăк çухалнă.
Реакси
урат.
Пăлханнă йалсем тăрăх
хура йупасем'
лартса çӳрет:
—Ак сире çĕр!
Мейĕр!
Кĕтсе тăрăр!.:—
Иун çеç
ҫарт та ҫарт
сирпĕнет.ӳтрен.
Хресҫен

ан хускалтӑр,
тесе,
тек ҫӗршӗн
улпут
туптарать
сӑлтавсем,
меслетсем.
Тарлаҫҫӗ
пройект ҫинче
кунӗн те ҫӗрӗн
министӑрсем
пур хевтипе
ехлетсе.
Унта та,
кунта та
сарать ак
тимре пек
кулак вальли
хуттӑр
Столыппӗн кӗрепӗ.
Йалта
никӗс пур
— снаш
сывлать улпут влаҫӗ,
мушик нӑхтине
хытарма пулать...

Шăп
    вăтăр мĕлйун хресҫен
        выҫă йулаҫҫĕ
икӗиҫ пин кулак
    ырлăхне пула.
Ленин
    ҫырат:
        «Авалхи йĕркене
помешҫĕк
    хăй
        ҫĕмĕрет пулсассăн,
вăл
    ирĕксĕр
        пĕр ушкăн кулаксене
тем ҫухлĕ
    ҫухăн,
        вак хуҫалăх
            ҫăттарасшăн.
Хресҫен
    ҫĕмĕрме пуҫласан
        аваллăха —
пĕтĕм
    улпутсен аллинҫи
        ҫĕре
конфискатсилесе
    йаланлăха

хӑй аллине илессе
пĕлтерет».
Ленин
çырать.
Унăн партти́йĕ
вирлĕ
сарать
çак шанҫăка,
хĕн çулпала.
Кĕрхи тĕттĕм каç пек
вăхăт
урлă-пирлĕ
шевле çуттипе
çурăлса
çункалать.
Малтан
аслатисĕр:
пастовккă та
статҫкă;
ҫухăнăн
креппит çине
çилĕ хуп-хура;
салтак
шинелне
ҫĕркесе пуçтарҫĕ,—
— мĕскершĕнха,

камшăн
çĕрес уккупра?! —
Кеоркишĕним?
Татса ил те
' сур!
Хĕрес
лартса памĕ
ура.
Йалта
йухăнса выртаť
кил-çурт,
лаша
— йулашки —
кайаť
напура...
Çыру.
Пĕлтерӳ.
Вăхăтсăр вилĕм.
Салтак арăмне
тухаť укçа.
Миçе тенкĕпе,
мĕн хак
парса илĕң
ĕçленĕ те,
савнă та
ђĕрĕ пуçа?..

Ие
    ак
        таврӑнан
            икӗ хул хушшине
туйа хӗстерсе...
    Кама кирлӗ?
        Ҫур ҫын.
Салху куҫпа ҫеҫ
    пӑхтаран
        ху ҫине,
„мӗскӗн“ те
    „мӑнтарӑн“
        илтен пур йенҫен...
Ҫав
    ӗмӗрне курман
        аш пӑтти витӗр
йунлӑн,
    кӑпӑклӑн
        вӗрен хурана
тухса
    ҫӗтретет
        пин ҫӑварлӑ сас:
            «Ҫитӗ!!!
Пӑрахӑр пӑшал!
    Кам мӗҥшӗн
        туранатӑ?!...»

Салтак
урипе сасӑлат
килӗшӳшӗн,
хресчен
акапуç тимрипе
сасӑлат.
Анчах
патриотшӑн
сан ӳкӗтӳ мӗн?
Вӗсен
çавçавах
виçӗ тӗслӗ йалав.
— Вӑрçа хирӗç
вӑрçӑ!
Туппун кӗпçине
çавӑр
вӑрçӑ пуçлакан
мул çине!..—
Ак
Циммервальт чӗннине
илтнӗ хыççӑн,
Керенски февралӗн
фальшне те
сиссен—
хускалчӗ
хай вӑтӑр мӗлйун

выçă çын,
хускалҫĕ салтак,
харпăк-савăт йышĕ
кĕрхи
аслатиллĕ
çиçĕмĕн çиçсе.
Метталçă,
пуставçă,
шахтор,
ҫукунçулçă...
Вăхăти?
Вăхăт.
— Йе вилĕр,
йе вĕлерĕр!—
— Вĕлерĕр
пур харамлăха!—
хушат револютси.
Йупан
çирĕм тăваттăмăшпе
пĕр ерăн
кун тулҫĕ,
çирĕм пиллĕкмĕш
пуçларĕ
тепĕр ерă.
Хаљ
çав

ик тĕнђе хушшине
ђикĕ çапнă
куна
вată паттăрсен,
пољшевиксен
калавĕ тăрăх
асилсен—
кирек хăçан та
хăвна
маларах çуралманшăн
шеллен.
Йăвăр
хăвăн ўттирўпе тўсмен,
курман
йапала çинђен
калаçмашкăн.
Хăвăн майна
хырнă пулсан сўсмен!
Ху
çав мăн лава
кўлĕнсе хăшкăлсассăн!
Еп
çул та çўрерĕм,
еп турăм екскурççи—
хама шыраса,
çĕршыва вĕренсе.

Анђах
пĕр
мусейлĕ тирпейлĕх çеç курђĕ
ман куç
ĕнерхи çапăçу вырăнĕнђе.
Ак
Смолђнăй.
Унта
Ленинкрат пролеттарийĕ
тăват хăй ĕçне.
Тытăмсем тĕслинђен.
Тăлмађ—
çак вунçиђ çулхи хĕр—
ăнлантарĕи
вунвиç çул ĕлĕк
пулнă ĕç çинђен?
Ун ђух
çак халђ хăнăхнă
влаç çуртĕнђе
вĕренĕ çын
хурт уйăрас вĕлле пек.
Иртен
çĕн ирђђен,
тепĕр кун
çурçĕрђђен—
виçшер тавлăк та

     куç хупман тĕлĕпе.
«Таса хĕрипраç» инçтиттуҫĕ тăрăх
     таканлă салтак атти
          каптăр та каптăр.
Маттур матруссем.
     Куçсем—
          витĕр тăрă—
пытарнă хаваслăх та,
     паттăрлăх та пур.
Тĕпҫеççĕ,
     ыйтаççĕ
          пĕр-пĕринҫен:
— Хăçан тухмаллаши?
     Хăçана хăварнă?..
Ватасҫĕ те—
     ампă!
          Тата мĕн çитмен?..
Кĕтмест тинĕссĕ,
     тинĕс йунĕ тăварлă.
Сасартăк
     сĕрлен кăлитур тăрăх
хыпар ҫашкăрат
     хăлхаран хăлхана.
          Пĕр çӳçентерет ӳттире,
               пĕр шăрăх,
ҫĕре

ђĕре кĕрешме ђĕнет,
йун пăлханат.
«... **Хăй** килнĕ, атсем...
Ĕненменђђĕ епир...
парикпе, теççĕ,—
çук паллама пĕртте...
Çирĕм тăваттăмĕшĕнђе
çĕкленмешкĕн
ир,
çирĕм улттăмĕшне—
кайа йулатпăр, тет».
— Апла
çирĕм пиллĕкĕмĕши?..
Ну, Кереңски,
калаçăпăр
епĕр санпа
ыран!
Нева кăпăкне
ђикĕмпуçлă
кĕрĕнçке!..—
тесе
саланаç
йĕкĕтсем
Смолђнăйран.
Шалта
кĕлитур вĕçĕнђе

пĕр пӳлĕм.
Илйиҫ
хыпалат
ӳсен тăвăл халне.
Умри
телефонĕн кĕпçи
хĕрӳллĕн--
мунҫа ҫулĕ пек—
тивет ун тăнлавне.
— Мĕнле кăмăлпа
ĕççынни—
хатĕри?—
ыйтат
вăл
Анттонăв-Овççейенккăран.
Çарта
мĕнле шухăш,
флотра—
çавтери
тĕпллĕн тишкĕрет,
вак-тĕвек таран.
Мĕнле ĕçлет
Вăрçăллă Ревкăмиттет—
Потвойски патне
хăй кĕрет,
хăй тĕпҫет.

Штурм
сарӑлнӑ,
ӳснӗ,
хӗрсе ӗлкӗрнӗ.
Пӗр вӗҫӗ
мӗлйун ҫинҫе,
телӗр вӗҫ—
Ленин.
Ӗмӗр курман
штрум ҫӗрине
ӗмӗрне
курман
револютси мимми
тӗрӗсленӗ.
Ӗнер
ВӑРӑКӑ йенне
куҫать
Петроппавлӑвск карнисонӗ.
Ҫӗр пин пӑшал.
Пайан
хыпар ҫитрӗ
Келҫҫинкфорса.
Ҫӗрле—
ВӑРӑКӑн
мӗн пур ваксал,
Кӗпер.

Кĕперсем çинҫе
Хĕрлĕ кварти.
Кĕпер айĕпе
шăвăнат
«Аврорă».
Ремонт тума килнĕ
крейççĕр
хăварҫĕ
хăйĕн ĕçхĕлне.
Тупăсем авăрларĕ.
Ирпе
— çиҫҫĕре—
телефон стантси
пирĕн.
Йăлтăр хулпуççиллĕ
йункkĕрĕсем
шереписемпе ҫăлханса
урлăн-пирлĕн
ҫăл-пар
саланаççĕ
йун пĕрĕхсе.
Илйиҫ
йулашки çеккунтҫен
хыпаланă
востаҥй пуљсне.
Вăл

пилӗк пӳрне пек
пӗлнӗ—
мӗнле ҫул малалла,
мӗнле план ун,
ҫампа
ҫав ирех
вăл ҫырат̆:
«Пурне те!
Вăхăтлăх тӳрешаран
вăхăт тухрӗ...
Халăх
мӗншӗн кӗрешнине
веҫех—
ҫӗре илесси,
килӗшӳ,
ӗҫ кантрулӗ,
совет влаҫӗ—
май пур хаљ
тума
ҫав ӗҫе...»
Каҫпа
ВăРăКă
Штап ҫуртне
хупăрланă,
Пӗр пуљăсăр
ҫиђђӗре

пирĕн Штап.
*Унтан*
хĕллехи кермене:
«Тухăр,
анăр!
Кĕрсе çĕмĕриҫҫен
парăннă пултăр штăп!»
Кунта
вĕçкĕн йунккĕрсем
ҫăрсăрланаççĕ кăшт,
кермен таврăшпе
париккат
тăп-тăкăс.
Вутран,
виле урлă,
йеҫҫĕрĕ çын таҫăкăш
витĕр—
тух,
хайăр,
çĕнтер,
тапта, каç.
Шалта
кукша пуçлă министăрĕсем,
пур ҫустрăсене
ҫаршавланă та,
шăппăн

йăпанаççĕ:
— мĕни... кĕрессе
кунтах
кĕреймеççĕ пуљ те?..—
«Ăçта!..»
Анђах
ак
Аврорă туппи
кĕрĕслетрĕ.
Сивлеккĕн пăхаç
хунарсем,
вилĕм пек.
Ђĕтрет
Варфолом Варфоломăђ
Растрелли[17])
пĕтĕм
пин те аллă çиђ
пўлĕмĕпе.
Ылттăн пакунçăсен
ђунĕ çук.
Панĕк.
Раçветкă
минутсеренех
тулăн-шалăн:
«Пулмастĭ çапăçса...
çĕнтерет востани...

пени усăсăр...
парăнатпăр пошалăй...»
Унҫҫен те пулмасӑ
ҫилĕлĕн пĕрĕхсе—
Нева ҫырми
татнă пекех
ҫыранне—
ҫăвар тулли
лаплаттарса
матӑ-ҫуртне
сăран пиншаксем,
аҫамсем,
кĕрĕксем
кĕпĕр-р-р
кĕрсе кайрĕҫ
патша ҫуртне.
Тулта
кăшкăраҫха
**урра** та **аттак**,
приклат
йулашки йункĕре
ҫӳпĕклет.
Кунта:
-- Ей; есир,
вăхăтлăх ваккат!
Пĕтрĕҫ вăхăтсем,—

аллăра çӳлелле!!..—
Çав кун
кăнтăрлах
Питĕр советĕнҫе
Ленин,
виç уйăх ытла
пытанса пурăннăскер,
Октапĕр çинҫен
каласа
йевитленĕ:
— Халех
килĕшӳ,
хресҫене—
халех çĕр...
Сотсиалисăм ĕçне
тытăнмалла пирĕн,—
тенĕ.
Унтах
Ленина итлекен
çав сăмах,
пайтах çын пуçне
муталанă
ăнлав çав—
куллен
тăвакан
ĕç пекех

ҫӑн-ҫӑнах
пулса пырасса
ёмӗрлӗх
ӑнланҫӗ.
Каҫпа
ҫав сӑмах
пурнӑҫа кӗрет те:
Советсен Иккӗмӗш Сйесне
пуҫтарӑннӑ,
польшшевиксем
Ленин сӗннӗ
текрете—
Ҫӗрпе
килӗшӳ текретне
йышӑнтарнӑ.
Тин
лаш сывласа
ирӗкленҫӗ
хура ҫӗр.
Тин
тупрӗ
хӑйӗн хуҫине те,
тусне те.
Иалта
ҫӗр текреҫӗ вулаҫҫӗ те
макраҫҫӗ,—

мĕнҫухлĕ
вăрҫман уншăн,
мĕн-мĕн тӳсмен тĕр!
Ахаљ тыттармарĕҫ
ăна
пире.
Улпут,
хăпма марха,
ҫĕрре те кĕрет.
Сиес йышăннă хыҫҫăн
ана-хире
штикпе
ҫырмалла пулҫĕ
тепĕр текрет.
Пĕтĕм
ҫĕрĕ пурнăҫ ани ҫинҫен
кайса пыран
класăн
пăнтăх вăйхăваҫĕ
тултан та,
шалтан та—
мĕнпур йенҫен
пире
ерешмен карти пек
карсаҫҫĕ.
Ҫéмĕрҫĕҫ,

ватрĕç,
ишрĕç,/
йухăнтарҫĕç;
тийерĕçĕ
ылттăн
савукăн та
ывăçăн,
унтан
Паришсен хупахне
тухса тарҫĕç.
Çăва тĕпне!
Кайăр!
Умăртан хыçăр!!!
Никам пулăшмасăр,
пĕр хамăр вăйпа
тăран транспăрта,
сасăсăр савăта
йаратпăр
хута.
Лартатпăр
йупа
вăрçа
пĕтерем пек туса
вăхăта. .
Виçсе,
ҫухласа—

çур шит те ытла мар—
ђакатпăр
епир
прокрамла вăрçăран.
Илйиђ аршăнне
вěренетпěр.
Ěрђет тавар:
хула кўртет
тырă,
йал—
çитсă,
сăран...
Усламăç та
тем те
тўпса парат сире,
вăл та
вывěска
сарса йађě самай.
Анђах
пирěн вăй
копператсире,
ун урлă
ўсетпěр
сотсиалисăма.
Плоккатăсем
хыççăн,

              Çеп çемми витĕр
тухатпăр
        ак епĕр—
              патмар та
                    вăйхаллă.
— Амерĕки,
        мари—
              хăвалăпăр,
                    çитĕпĕр,
хăварăпăр!—
        терĕ
              ĕçхалăх.
Плансем
        алăра.
              Хисепленĕ,
                    кăларнă.
Йумах та,
        фантгаçи те мар,—
              кур,
                    çит:
Кунта
        Тнепрострой,
              кунта—
                    пулă тăварлăн,
кунта
        автосавăт,

кунта
Туркçип.
Лере
ав
електăр стантси,
лере—
сахăрăн
савăђёсем.
Ку—
Куспас,
ав леш—нехт...
Кăçал
вёсем
**пилёк çёр вунсаккăрăн**
кёреççё
сотсиалисăм картишне.
Ытах
ђыхвăр çеç
хăй тёллён
шантармаст тёк,
тёссёр пулсан
ђыхвăр
кун йевёр ёçсенђе,
пайан
еп
пёрне

вĕçертсе кăтартас теп
вĕçĕмсĕр
пултарулăх
конвейĕрĕ çинҫен..
Нумай та пулмаст
вăрçă-харçă пушарĕн
хăрăм-тĕтĕмне
сирсе йанă çĕрте
ҫăлт шурă
станитсăсемпе
йунашарăн
ларат
ак-
ĕçхалăх вăйĕн
ĕçкĕрҫĕ.
Иквиçĕ çулта—
никам та
ĕ енмĕ тĕр,
курсан—
ĕненмесĕр
йулмĕ никам—
хăй пысăккăшпе
тĕнҫере
пĕртен пĕр
кĕрлет
тулă хапрăкĕ

«Кикант».

Утă уйăхĕ
пĕтсе килетҌĕ.
ПĕрҌĕ хытса çитнĕ вăхăт.
Шăрăх.
Малтан
елеваттăр —
совхосăн кĕлеҌĕ —
пире
саламларĕ
катаранах.
Ĕлĕк
кив йала пынă Ҍух
Ҍиркӳ
курăнатҌĕ
малтан
çинçешке тăррипе.
Ку çурт...
Ҍиркӳрен
çӳлĕрех тĕр те ку,
анҌах
каппаймаст
вĕçкĕлҌĕк тăри пек.
Пĕлĕт
кирлĕ мар ăна.
Вăл

пĕлет:
унта
пушпушах
çак сенкер çутçанталăк.
Курак-ђакакпа
ват хĕрсемшĕн
пĕлĕт,
пурнас
тен пулсан—
çĕр çинђе
çанă тавăр.
Вăл
тавăрнă çанă.
Петтон пӳне
вирлĕн
тăрат каçăртса.
Тымар йанă
—çĕре.
Кун пек
хуралтсем
комуна
ӳтлĕн-тирлĕн,
ђĕррĕн
кăтартаççĕ
сире...
Çĕр çитмĕл пин

кектар талккăш
выртать
пĕр тăтăш
уй-хир.
Хăшĕ
сан ану кунта?
Тахăш.
Çук
çĕр валеçес
хуйхи.
Веçех—
санăн.
Пурте.
Пĕтĕм шăпипех.
Лере
ав
расна ĕçлекенĕн
лаши
компайăна пăхсан
вĕтĕннĕ шăши пек.
Çухаçă
хыçать пуçне:
— ма каплаши?..—
Компайăн
вырать,
çапать,

сăвăрат.

Пăрçа пек,
суса хунă пек
ҫысла тулă.

Компайăн
ҫăнах
(мар ахаль—сăвăра)
пĕҫҫĕн сухаçа
ҫуравлат
пусă урлă.

Компайăн
калат пек:
«Мана
йăлăхтарҫĕ

Америк улпуҫĕсене
самăртма.

Çук,
урăх
пулассăм килмест ман
тарçă,

хама та
тек
тарçă тавраш
кирлĕ мар.

Еп
ирĕк ҫслĕ çынсемпе

пурӑнасшӑн;
тарпа
ан ҫулаҕҕӗр
ман ал-урама.
Еп
килтӗм кунта
хам йӑха хӑвармашкӑн
кайран
ҫак хӑмӑл пек
мула
турама.
Еп
килтӗм кунта
йӑрансем пӗтерме—
ана йӑранне,
йал-хула йӑранне.
Еҫ
сирӗншӗн
пулнӑ ӗлӗк
тӗрме,
манпа
вӑл
ҫӗкленӗ
телей вырӑнне...»
Компайӑн
калат.

А компайăнçă
Тшек
илтетши
хăйĕн машшинин
калавне вăл?
Йе
ун ђĕринђе
толлар çеç
тĕлкĕшет?
Йе
увшăн
пĕрех
Ленинпа Кампанеллă...[18])
— Амерĕк,
Амерĕк!
Нйу-Йорк
йе Ђиккакă—
çĕршыв вăл
çĕршыв çав,
анне вăл—
аннех...
Кунта
йут тăпра ăшне
алă ђик акă,
хăнăх
хытă вырăс ђĕлхин

ӑнлавне...—
Салху кулӑпа
вӑл тӑнлать
тӑлмаҫа
ҫак Тшек,
йе ҫак Тшок,—
ҫак
Америк ҫынни.
Йепле тӑрӑшсассӑн та
халь вӑл
паҫах,
йӑлтах
пирӗн пек
пӑхаймасть
ӗҫ ҫине.
Анҫах
шалта пур ун
пытарӑннӑ сасӑ,
ҫав сасӑра
клас ҫӗлӗхӗ
палӑрать.
Ҫав сасӑ
тӑлмаҫ хыҫӗнҫен
йӑнӑшмасӑр
калать те хурать
ӑнсӑртран;

«Ол райт[19])»

. . . . . . . . . . . . . . . .

Çӗр çитмӗл пин
кектар..
Компайӑнсем
тем пысӑкӑш
ҫӗрӗ хурт пек
çисе çавӑрнаççӗ тырра,—
сик те лар...
Хӑшӗ
сан ану кунта?
— Пуртє.
Кӑçал,
çак виççӗмӗш
татӑклӑ çул,
пулса çитмелле
пирӗн
никӗс.
Кӑмрӑк-ҫукуна та
тӗллетӗр
куçу,
пуссем те
пулма тивӗç
тикӗс.
Кӑçал
**пин те хӗрӗх**

машшин-трактăр стантси.
Вăл
**пин те тăватçĕре**
çитĕ,
çитерĕпĕр!
Çак
вунă мĕлйун
**çирĕм пиллĕк**
парсан
— ӡим! —
вара,
Пан-Йеврол,
урăхла
пуплĕр есĕр.
Халь
есĕр
пăхатăр:
—вăрçма сăлттав пури?—
Шурилнĕ моноккăльлисем
кураççех:
«Раççей
вăл
террорçăсен тиктаттурĕ.,,
Раççей
ирĕксĕр
ĕçлеттерет...

Раççей...»

. . . . . . . . . . . . . . .

Тăсатăр
    елек ђĕлхине,
        тăсăсăр,—
елеки
    хаљ
        пирĕн
            çула-йĕре картлĕ!
Историйе
    тăватпăр
        епир—
            СăСăСăР—
тĕнђе пролеттарин
    утарлă прикати.
Етемлĕхĕн
    ђи пултаруллă çынни,
ђи аслă ăссем,
    ђи шултра
        талант
тинкернĕ
    хаљ
        пирĕн йенне.
            Епир çĕнни
вĕсене
    сире хирĕç тăма

хавхалат.
Тăвăр
вĕсене
кăппиттал тĕрминҍе,
ниçтан
хĕлхем çутă çук,
нихăш йенҍен те.
Вĕсем
калаймаççĕ:
«Ах, мул çĕрминҍҍĕ...»
Çĕрет вăл,
çĕрет
хăйĕнҍен хăй.
Ҍыхас та
ĕçес,
конккурентси те
пиршă—
йепле
ҍун çырлахтăр
халҍ
çакăнпалан.
Çампа
ак çĕклет,
çĕклет алă
пирĕншĕн
искуствăн

ђи тӳрĕ çынни
Роллан[20]).

Есир
пире
«варвăр» та,
«скиф» та терĕр.

Тĕрĕс:
тăшманпа
епĕр скиф,
епĕр варвăр.

Анђах
туссене
паллатпăр епĕр,
туса
ђĕрене
кăларса
касса парăпăр.

Веçех,
пурте—
пирĕн:
çак хĕрлĕ хĕвел те,
çак анлă Атлантăи те,
шукăљ Париш те.
Шоппен[21]) ђĕлĕхĕ те
пире май
ђĕвĕлтетĕ,

пире çеç
сăрлĕ
Рафаел-Ремпрант[32])
йышĕ те.
Пĕр
**вăхăт** кăна
уйăрат пире хаљ:
— ку Франтси,
ку Латви;
ак кени,
ак ахаљ çын...
Кăтартăпăр
епĕр—
кам кени,
кам ахаљ
тепрер
пилĕк çул хушшисем
калаçсассăн.
Марш
малалла,
çĕнтерӳллĕ приката!
Йерт
тĕнђери хастара
хупала.
Çамрăки
епĕр,

йе епир вата,
пирĕн çулсем
йышлă мар
— вунтăваттă,
епĕр
малта
— пионер—
пулмалла.
Тунă
нумай,
тумалли
тата вĕçсĕр.
Лосăнк пулса
çак ҕĕнŷ
пайан вĕçтĕр:
— Пĕр елекçе те
ал ан тăс,
йулташ,
ирĕк ĕçŷшĕн
утарлă тăр!
Пилĕк çула
тăвата çулта
тухăпăр,
татăпăр,
тултарăпăр.

1931.

---

## Сăмахсене ăнлантарни.

1) **Парамат**—пысăк вăлта

2) **Ахрарлă**—çĕрĕçлевлĕ, йалхуçалăхлă.

3) **Хеопс**—авалхи Йекипĕтăн пĕр ђаплă фараонĕ (патши). Вăл питĕ çӳлĕ пирамитсем тутарса ларттарнă, çакăнтан—Хеопс пирамиђĕсем.

4) **Петховĕн, Мотсарт**—паллă композиттăрсем.

5) **Пуслай Ваçки**—Ваçкă Пуслайĕв, вырăс халлап-йумахĕнђе вăйлă, ђарусăр, „сарлака“ ђĕрellĕ паттăр.

6) **Некрассăвăн** „Маннă йал“ йатлă сăввине пăх. Ђăвашлана Ђĕкеç Ç. куçарнă.

7) **Холопсем**—вырăс пайарĕсен аллинђи çынсем, ђурасем.

8) **Картрайт, Аркрайт**—18-мĕш ĕмĕрти Анклђи ăстисем.

9) **Тшемĕс Уатт**—пăспа ĕçлемелли машшин шухăшласа кăларакан.

10) **Архимет**—кĕрексен пирĕн ерăђђен 3-мĕш ĕмĕрте пурăннă аслă маттематтĕкĕ, мехханĕкĕ. Вăл фиçĕкĕн пĕр саккунне тĕпђесе тупсан, ваннăра шыва кĕнĕ çĕртен, ват пуçĕпе шăр çарамас сиксе тăрса „еврĕккă!“ (еп тупрăм)—тесе кăшкăрса ђупнă имĕш.

11) **Путтилăв**—хађхи Ленинкратри пысăк тимĕр-тăмăр савăђĕн револђутсиђђенхи хуçи.

12) **Моросăв**—Ореххăвă-Суйĕвăри, пысăк пусма-тавар хапрăкĕн хуçи пулнăскер.

13) **Майра аслапай**—Иккĕмĕш Кĕтерин патша.

14) **Йакур Çтефенссон** –ђукунçул ĕçне пуçарса йанă акăлђан иншенерĕ.

15) **Ливерппулђ-Манђђестĕр**—Çтефенссон малтан çак икĕ хула хушшине хыvтарнă ђукун çулпа ђапа тухнă.

16) **Финал**—пĕтмĕш, вĕçĕ.

17) **Растрелли**—архҳиттектăр, Хĕллехи кермен авттăрĕ.

18) **Камппанеллă**—Итталири 16—17-мĕш ĕмĕрте пурăннă комунис, уттоппис.

19) **Ол райт**—пурте тĕрĕс (акăлђанла).

20) **Роллан Ромен**—пирĕн саманари хрансус писсаттĕлĕ. Вăл хăйĕн йулашки статйисенђе СССР-ти сотсиалисăм тăвакан пролеттарнат йенне çирĕппĕн тăрат.

21) **Шоппен** -палђак мусăкçи, компоçиттăр.

22) **Рафаел, Ремпрант** -хутошнĕксем.

---

Послано в производство 26-VI-32 года
Подписано к печати 7-VII-32 года
Редактор И. Павлов
Тех. редактор Н. Степанов

Уп. Чувашлита № 1457. Заказ № 872. Тираж 5100 экз.

Ст. ф. б. 100×150. Об'ем 4 п. л. 52.000 п. зн. в п. л.

Хакĕ 1 т. 10 пус
Цена 1 р. 10 коп.

Х—3

0-11

4470

1933

П. Хусангай

**ЗЕМЛЕУСТРОЙСТВО**

Чувашиздат 1932 Чебоксары